Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ҫĕнтабĕн 18 вырсарникун 216(5029) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш ҫул тухать ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаҫачĕ Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактăран — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăҫ пайĕн—0—85, йăлхусалăх пайĕн—4 — 97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăс пайĕн—7—97, йăлкорсен пайĕн—2—30, - дежурнăйĕн — 6—23.

Промысла кооперацисен ĕҫне тĕпрен лайăхлатмала

Пирĕн республикре, сталинла никĕ пилĕкҫуллăхра туса лартна пысăк комбинатсемпе, хăпăрăк-савăтсемпе пĕрлех, промысла кооперацисен вунпăр хапăрăк-савăчĕсем, ҫĕршер мастерскойĕсем ĕҫлеҫҫĕ. Вĕсем пурнăҫĕн ытларах куллен кирлĕ таварсем кăлараҫҫĕ.

Промысла кооперацисен промышленнăҫĕ сарăлса пырать, вĕсем кăларакан продукци хисепĕ те ҫулран-ҫул ӳсет. 1937 ҫулта цĕтĕм промысла коопераци ҫиҫтеми 53,5 мĕлйун тенкĕлĕх продукци кăларнă. Вăл хисепрен: Промсойуз—26,2 мĕлйун тенкĕлĕх, Вăрманпромсойуз—17,5 мĕлйун тенкĕлĕх, Куҫпромсойуз—7,6 мĕлйун тенкĕлĕх, Коопинсойуз—2,2 мĕлйун тенкĕлĕх кăларнă.

Пирĕн республикăра промысла кооперацине пысăк хăвăртлăхсемпе аталанса пыма пур майсем те пур. Ҫĕршыв пуйăлăхĕсем, производствăсене пысăкках механизацилени, лайăх мастерлăхпа ĕҫлекен кадресем йышлăн ӳссе ҫитенни—саксем промысла кооперацисен промышленнăҫне ҫулсерен мар, уйăхран уйăха вăйланса пыма май параҫҫĕ. Анчах промысла кооперацисен ҫиҫтеминче ҫекна курмастăр-ха епĕр. Вĕсем, хăйсен производствăй планĕсене ҫултан ҫул пысăклатса пырас вырăнне, иртнĕ ҫул плана мĕн тарăн тултарнă, ҫитес ҫул та сав виҫенех, унтан иртме ҫук виҫе вырăнне хурса, йышăнаҫҫĕ. Ҫĕршыва ытларах продукци парас шухăш мар, ĕҫлеме ансатрах тăвас шухăш промысла кооперацисен чылай ҫиҫтемĕсенче ҫаплах выраи йышăнат-ха.

Республикăри промысла кооперацисенче пулнă халăх тăшманĕсем пур майсемпе те промысла кооперацин ӳсĕмне чăмантарма, ĕҫхалăхне сахалтарах продукци парса, халăх умĕнче тавар ҫитмен пек кăтартма тăрăшнă.

Çавăн пек, Чăваштромсойуз кăсалли ҫул продукци хисепне иртнĕ ҫулхинчен чылай нумайтарах кăларма пултарат. Çав вăхăтрах вăл, тата унăн руководствине пулнă Поҫлаков, 1938 ҫулти производствă планне иртнĕ ҫулти исеп чухлĕ кăна йышăнна. Çак плана тултарма та йăвăр пулнă пек кăтартас шутпа, производствă планне тултарассине тĕрлĕ майсемпе аркантарма пăхнă. 1938 ҫулта 8 уйăх планне пурĕ те 86,6 процент кăна тултарнă. Промсойузăн 20 отрăслинчен 14 отрăсли плана тултарайман. 8 уйăх хушшинче вăл ҫĕршыва 2,5 мĕлйун тенкĕлĕх продукци памалĕ. Çакăн пек пысăк парăм вăл промсойуз ҫиҫтеминче унăн руководителĕ пулнă Поҫлаков нумай ҫулсем хушши производствă планĕ пысăкки синчен сарса пынă ҫĕрĕк шухăш пирки кăна пулма пултарнă.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăнна тăрăх, Чăваштромсойуза Вăрманпромсойузпа пĕрлештерсе вăрман промысла кооперацине пĕр совуз—„Чăваштревлеспромсоюз" туни. Анла пулсан та епĕр Чăваштромсойузпа унăн руководителĕ пулнă Алексейĕн пирки асăнмасăр иртсе кайма пултараймастпăр. Куҫсойуз 1937 ҫулта та, 1938 ҫулти 8 уйăх хушшинче те, промысла кооперацисен ҫиҫтеминче чи кайра пыракан сойуз пулнă. Вăл ҫултан ҫула, уйăхран уйăха хăйĕн планне тултарайманăр ĕҫленĕ.

Промысла кооперацисен производствă планĕсене тултарса пыманни пурнăҫра питех те сисĕнтерет. Шупашкарти, ҫавнашкалах районсенчи магазинсенче, хуҫалăхра куллен-кун кирлĕ таварсене, самăкран, витре, примус горелкисем, керҫе, вăлашка, тирĕк-чашăк т. ыт. тупма ҫук. Вăл таварсене промысла ертелĕсем ытлă-ҫитлĕкех кăларма пултарҫҫĕ. Тумтир, кĕпе тавраш ҫĕлетес, атă-пушмак йӳсас ĕҫри йĕркесĕрлĕхсем ҫинчен ҫиганлсем сахал пулман. Анчах промсойуз руководителĕсем ҫак ĕҫсене тивĕҫлипе йĕркелесе парассăнчен ытла калаҫусемпех иртреҫҫĕ.

Пуйăн та куҫтурăлă пурнăҫпа пуранакан ĕҫсыннисем паха та илемлĕ таварсем нумай ыйтаҫҫĕ. Промысла кооперацисен ответлă та хисеплĕ задачĕ вăл—совет ĕҫсыннисене кирлĕ таран пысăк пахалăхлă таварсем тăратасси пулнă. Çак ответлă задачесене пурнăҫа кĕртсе пыма, чи малтан, промысла кооперацисен руководствинче сарăлнă производствăна планне тултарма ҫук текен сĕрĕк шухăша ҫĕмĕрсе тăкни, промысла кооперацисен ҫиҫтеминчи тăшмансемпе вĕсен сăтăрла ĕҫесен йулашкисене ҫĕмĕрсе тăкни кирлĕ. Промысла кооперацин ҫиҫтеминче, йĕртсе пыракан организенчен пуҫласа айăла ҫитиччен, пур йышши панчăкăр, жуликла, рвачла етемсене, растратчиксене, вăрăсене тасатса тухмала. Йĕртсе пырас ĕҫе производствăра политикăпа техникă йĕнчен ҫитĕнĕ, производствă техникине ҫĕнсе илнĕ тӳрĕ сынсене хăйăлăн лартса пымала.

Вырăнсенчен килекен хыпăрсем тăрăх, промысла кооперацисен ҫиҫтеминче спекулянтла ĕҫсем ҫинчен калакан фактсем те сайра-хутрă мар тĕл пулаҫҫĕ. Кăрмашри (Куславкка) промысла ертелĕнче тунă тир-сăран таварĕсене айăккала хаклă хакпа сутма пуҫланă. Çакăн пек фактсем ытти ҫиҫтемĕсенче те пур. Çак шăтăн-сурана хăйăрăн пĕтерсе лартас пулать.

Пĕччен алăстăвҫсене, кустарсене ертеле пĕрлештерсе пырасси—промысла кооперацисен ĕҫĕнчи пысăк задачăсенчен пĕри пулать. Пайăнки куна вĕсенчен чылайĕшĕ ертелсен тулăшĕнче. 1929—30 ҫулти перепиҫ тăрăх, кустарсем 46 пин ҫын шутланнă пулсан, 1938 ҫулти январĕн 1-мĕшне промысла ертелĕсенче 27.858 ҫын кана пулнă.

Промысла кооперацисен ертелĕсенче стахановĕнҫемпе ударниксем пиншерĕн шутланаҫҫĕ. Шупашкарти „Металлист" ертелĕнче Кирил Кадалыйĕв йăлтăн нормăна 200 процентран кайа мар тултарса пынăран. Вăл сентăбĕрĕн 3-мĕшĕнче нормăна 800 процент тултарнă. Сентĕрĕврринчи катка-пичке савăтĕнчи Галкин, Мариинă йăлтăшсем хăйсен нормине ытлашшипех тултарса ĕҫлеҫҫĕ ҫеҫ мар, тата вĕсем пĕтĕм производствăна хăвăрттăн ҫĕкленеми майсене кăтартса парҫҫĕ. Анчах сойуз тата ертел руководителĕсем алăстăвҫсен пуҫарулăхне йертсе пыман пирки стахановла йăхăм промысла кооперацисен ҫиҫтеминче ытла та йĕрипен сарăлса пырать. Пур сойузсемне ертелсенче те стахановла йăхăма йĕртсе пырассине куҫтаботниксем ҫине хунă. Çакăн пек тума бюрократла руководителĕсем кăна пултараҫҫĕ! Çакнашкал йĕркеҫĕрлĕхе халех пĕтермелле. Стахановла йăхăма партине хуҫалăх руководителĕсенчи хăйсен йĕртсе пыма.

Ертелсенчи партипе комсомол организацийĕсем уменĕе алăстăвҫсем хушшинче политикăлă массăла ҫĕре чĕнипе йĕркелесе йăмăла тăнăçне уйрăмăнах пысăк задачăсем тăраҫҫĕ. Вĕсене ку ҫĕре партипе комсомол райкомĕсенех кулленхи йĕртсе, пулăшса пымала. Алăставҫсене ССРС Верховнăй Совечĕн саккунĕсем ҫинчен тĕплĕн ăнлантăра памăла, вĕсене ПСК(б) Парти историне ҫĕнĕ учебник тăрăх вĕренме пулăшмала.

Партине правительствăпа промысла кооперацисене хăйсен ĕҫĕсене вăйлатса пыма пур условисене те туса панă. Вĕсен ҫĕршыва нумай та пысăк пахалăхлă таварсем парса, ĕҫсыннисен кулленхи ыйтăвĕсене тивĕҫтерсе пымала.

ИНФОРМАЦИЛĔ ПĔЛТЕРӲ

1938 ҫулхи сентăбĕрĕн, 16—17-мĕшĕнче ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн VII-мĕш пленумĕ пулнă иртрĕ.

Пленум ҫак йыҫусене пăхса тухрĕ:

1. Партин Шупашкар хула организацин V-мĕш конференцийĕн решенийĕсем ҫинчен;
2. ПСК(б)П Обкомĕн пĕрремĕш ҫекретарĕн ĕҫĕсене туса пыраканĕ ҫинчен;
3. Партин Облăҫри XIX-мĕш конференцин ыйтăвĕсем;
4. Организацилĕ ыйтусем.

Пĕрремĕш ыйту тăрăх пленум йышăннă резолюци „Чăваш Коммунĕ" тата „Красная Чувашия" хаҫатсен пайăнхи номĕрĕсенче пичетленсе тухать.

ПСК(б)П Обкомĕн пĕрремĕш ҫекретарĕн ĕҫĕсене туса пыма пленум Алексей Алексейĕвич Волкăв йулташа суйларĕ.

Пленум ПСК(б)П Обкомĕн облăҫри конференцинче тумали отчотне ҫирĕплетрĕ, партин Облăҫри конференцине сентăбĕрĕн 24-мĕшĕнче ҫак кун йĕркипе пухма йышăнчĕ:

1. ПСК(б)П Обкомĕн ĕҫĕсем ҫинчен отчот;
2. Ревизи комиссин отчочĕ;
3. ПСК(б)П Обкомне суйласси
4. Ревизи комиссине суйласси.

Пленум Т. В. Васильĕва тата Р. И. Осипăва Обком членĕнчен, И. З. Захарьва ПСК(б)П Обком членĕсен кандидатĕнчен кăларчĕ.

ПСК(б)П Обкомĕ.

ПСК(б) Парти Обкомĕн VII-мĕш Пленумĕ 1938 ҫулти сентăбĕрĕн 16-мĕшĕнче йышăннă решени

Г. И. Иванова, вăл политикă тĕлĕнчен шанчăксăр тесе, хула комитечĕпе хула парторганизацине политикăпа ĕҫлех тĕлĕнчен йертсе пыма пултарайман пирки, тăшманла елементсене хӳтлесе пынăшăн тата вĕсене ĕҫе лартса пынăшăн ăна хула комитечĕн пĕрремĕш ҫекретарĕнчен тата хула комитет пленум составĕнчен кăларасси ҫинчен партин Шупашкар хула организацин V-мĕш конференцийĕ йышăннă решени ҫинчен

И. В. Дубăв йулташ пĕлтерине итлесе тата сӳтсе-явăрласа хыҫҫăн, ПСК(б)П Обкомĕн VII пленумĕ ҫапла йышăнат:

Партин Шупашкар хула организацин V-мĕш конференцийĕ йышăннă решенине ырлас, Г. И Иванова Обком ҫекретарĕнчен тата ПСК(б)П Обком пленум членĕсен составĕнчен кăларас, унăн партилĕхĕ ҫинчен пăхса тухма ыйтăва ПСК(б)П Тĕпкомĕ суменчи Парти Контроль Комиссине парас.

Мускавран Тбилисине 6 сехет те 07 минут вĕҫĕ

Саламăн ăотчикăн хăвăрт вĕҫевĕ

Сентăбĕрĕн 15-мĕшĕнче аэрофлотăн Грузини управленийĕ иккĕмĕш класлă пилочĕ комсомолец Саламăн йулташ „ПС-40" почта самолăчĕпе Мускавран Тбилисине хăвăрт вĕҫме заданни илнĕ.

Саламăн йулташ заданине чăпăлăн пурнăҫа кĕртнĕ. Хиреҫ вăйлă ҫил вĕрнĕ пулсан та, Мускавран Тбилиси хушшинчи 1.950 километра самолăт, Харькăвра тата Минеральăе Воды хул-сенче кĕске вăхăтлăха анса лярса, 6 сехет те 07 минут вĕҫнĕ. Вĕҫевĕн сехетри вăтам хăвăрттăлăхĕ—325 километр. Мускав—Тбилиси трассăна халĕ вĕҫе ҫӳрекен почта самолăчĕн рейсĕ икĕ куна тăсăлат.

Алексей Алексейевич Волкăв йулташ Ана ПСК(б)П Обкомĕн VII-мĕш Пленумĕ ПСК(б)П Обкомĕн пĕрремĕш ҫекретарĕн ĕҫĕсене туса пыма суйлана.

* *

А. А. Волкăв

Алексей Алексейевич Волкăв йулташ 1890 ҫулта ҫуралнă, Путилăвски савăтри рабочи (Ленинград). 1915 ҫултанпа ПСК(б)П членĕнче тăрат. А. А Волкăв йулташ Октябĕрти социлисăмла революцине Путилăвски савăтĕнчи рабочисен Хĕрлĕ Гварди отрăдне йертсе пынă. Граждан вăрҫинче 7-мĕш армин 19-мĕш дивизи комиссарĕ пулнă. Граждан вăрҫи хыҫҫăн мĕн йулашки вăхăтченех партин йертсе пыракан ответлă ĕҫĕнче ĕҫленĕ. Йулашки ҫулсенче Белорусси К(б)П Тĕпкомĕн пĕрремĕш ҫекретарĕнче ĕҫленĕ. Партинче тăнă вăхăтра Волкăв йулташ халăх тăшманĕсемпе, фашисăмăн троцкислă-бухаринла тата буржуăлă-националиста агĕнтĕсемпе пĕр шеллемесĕр хăйăрăн кĕрешсе пынă.

А. А. Волкăв йулташ ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн членĕ.

Ленинград—Мускав—Ленинград маршрутпа хăвăрт вĕҫни

ЛЕНИНГРАД, 15, (ТАСС). Граждапла сыпăлăн ҫĕвĕн ҫурҫĕрти управленийĕ хăвăрт вĕҫекен почта самолăчĕ „ПС-40" илне. Вăл самолăт хăй ҫине почта тата груз илсе Ленинград—Мускав, Мускав—Ленинград маршрутпа вĕҫет тунă.

Ленинградпа Мускав хушшинчи ҫула самолăт пĕр сехет те 58 минут, Мускавран Ленинграда 2 сехет те 5 минут вĕҫнĕ.

ЙУТ ҪĔРШЫВСЕНЧЕ

Черчилль статйи

ЛОНДАН, 15. (ТАСС). Англири паллă политикăла деятель консерватăр Черчилль пайан „Дейли телеграф энд морнинг пост" хаҫатра пичетленнĕ статйинче: Германи фашиҫĕсен аййăлне Судет облаҫĕнче пулнă халăхи йĕркесĕр лару-тăру нумай вăхăт хушши тасăлмă пултарайманăҫ, тесе ҫырат. Германи фашиҫĕсем,—ҫырат малала Черчилль,—Чехословакăн ҫине тапăнма тĕллĕн хатĕрленнĕ.

„Ĕҫ хăвăрт мĕнле те пулин йунăлă япăнăт ĕнтĕ пăлхав тăвассинче ҫеҫ,—вăл Гитлĕр кăтартнине пулат,—ҫавă вара Чехословакăн ҫине тапăнма сигнал памалла. Германи фашиҫĕсем уҫтиматум лартасси ҫинчен шухăшламали те ҫук".

Гитлĕр,—тесе кăтартат малала Черчилль,—ҫиҫĕм хăвăртлăхĕпе хăвăрт ҫапса ҫитĕнӳ тăвасшăн. Анчах Испани халăхĕ вăйлăн хĕспăшалланнă фашисла интервентсемпе геройла ҫапаҫни—тенчери чи лайăх хĕспăшалланнă ҫарсенчен пĕри пулса тăракан Чехословакăн ҫарĕ Германи ҫарĕсене вăйлă отпор парассине ăнеме пăхкĕс паратĕ. Тĕнче ҫавăн пек йулна вăрҫăсем ҫине пассивлăн пăхса тăма пултараймаст, тесе шутлатăп епĕ. Пĕрремĕш хут пăшалтан пенĕ

Чехословаки агентстви пĕлтерни

ПАРИЖ, 15. (ТАСС). Чехословаки полицийĕ темиҫе генлейнла депутата арĕслени ҫинчен тата вăл депутатсем пайан чрезвычайлă трибунал умне тăрасси ҫинчен Германирен пĕлтерĕҫ хыпара Чехословаки агентстви пĕтĕмĕшпех суйа хынăр, тесе пĕлтерет.

Чехословаки ҫарĕн вăй-хăвачĕ

Швейцарипи „Национальз дейтунг" хаҫат Чехословаки ҫарĕ Германи йĕнчен тапăнинне отнорама хатĕр тăни ҫинчен ҫырнă ҫар специалисĕн статйине пичетленĕ. Статйара ҫапла ҫырнă:

— "Чехословаки ҫарĕ тĕнчери чи лайăх хĕспăшалланнă ҫарсенчен пĕри пулса тарат. Йулашки ҫулсем хушшинче Чехословаки республикĕнчи пек ҫăвсен ҫĕршыв оборони валăҫи кирлĕ средствăсем вăйлăн хатĕрленни урăх нихăш государствăра та пулман пулмала. Чехословакире пурне те тивĕҫ ҫăр повинăнҫĕ пурнăҫа кĕрсе пырат. Чехословацки ҫарĕ призыв йĕркипе—илнĕ сынсен ҫарĕсенчен тата тара кĕрĕннĕ салтаксĕнчен тăракăн регулярлă ҫарта 200 пин ҫынна йăхăн шутланат, хатĕр тăракан резервăсенче 1 500 000 ҫын. Вăрҫа пуҫланас пулсан, Чехословаки малтанхи ҫапăҫусем валăҫи 600 пин ҫын тăратма пултарат.

Чехословаки ҫарĕ йăвăр артилери ҫине хытă ҫавăрнса пăхат. Бронълă автомашинăсем тăвасси чылайăх ӳснĕ. Чехословаки ҫарĕн халĕ сахалтан та пин самолăт пур, вĕсенчен нумайăшĕ бомбардировщиксем. Тăрăх ăшшин калибрлă пысăк мар орудисем те нумай. Сывлăшпа химилĕ тапăнăва хирĕҫ оборонăна пĕтĕм ҫĕршыва пите лайăх организацинĕ.

Чехословакири ҫар промышленăҫĕн пултарулăхĕ ҫăл тери пысăк. Нумай вăхăт хушши пыракан вăрҫăра ҫар валăҫи вăл ҫителĕклĕ хĕспăшаласа тăратма пултарат. Шкод савăчĕсене пĕтĕм тенче пелсе тăрат. Ҫăрти тренировкă пысăк ӳсĕлехре тăрат. Ҫăран лайăх хатĕрленнĕ кадресем пур. Ҫапла, Германи Чехословаки ҫине тапăнас пулсан, унăн вăл Прага хулинче хăйпални ҫăмăл прогулка пек пулас ҫук".

(ТАСС).

Йут ҫĕршыв сыннисем Германирен тухса кайаҫҫĕ

Швейцари печечĕ пĕлтерне тăрăх, Германирен урăх ҫĕршывсене кайакан пуйĕсем синче халăх тулăлайăх. Йут ҫĕршыв сыннисем Германирен пиншерĕн тухса кайаҫҫĕ. Берлинри дипломатлăх делегацийĕн франшуҫенчен вăмăлăнăҫ, хăйсен тăвай ҫĕршывне тухса кайнă.

(ТАСС).

Чехословаки республикĕпе пĕр шухăшлисен митингĕ

Нью-Йорк, сентăбĕрĕн 15-мĕш. (ТАСС). Пайан Нью-Йоркра Йыхнои скверта Чехословаки республикине пĕр шухăшлисен пысăк митингĕ пулса иртнĕ. Митингре тухса калнăй оратăрсем фашисла агрессине чарса лартма Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен штатĕ демократлĕ ҫĕршывсепе пĕрле ĕҫлеме кирли сине кăтартнă. Митинг Чемберленăн агрессăрсене хӳтлекен политикине сивлесе, Германине, Италине хĕспăшалсем парса тăрассине чарса лартма, Келлог пактне пурнăҫа кĕртме, Чехословаки, Китай тата Испани халăхĕсене пулăшу парса тăма ыйтнă.

Митинга конвертри пухнă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕ

Сентябрĕн 11-12-мĕшĕсенче Вăрнар районĕнчи пархатранскисем пухăве пулса иртрĕ. Пухура Партти Обкомĕн представителĕ И. В. Новикăв йулташ тата Вăрнар округĕнчен суйланă ССРС Верховнăй Советĕн депутачĕ—Совет Сойуз Геройĕ П. И. Пумпур йулташ пулчĕç. Пуху икĕ ыйту сӳтсе-явăрĕ.

Малтанхи ыйту тăрăх пренире 25 çын тухса калаçрĕç.

Халăх тăшманĕсем пусуçавăрăнăшне пĕсас тĕлĕшпе нумăй сăтăрла ĕçсем тунă. Парти райкомĕ сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес ĕçленĕпе пайăнки куна 85 колхозран 83 колхозра пусуçавăранăшне тӳрлетнĕ.

ССРС Верховнăй Советĕн Иккĕмĕш Çеççийĕ йышăнă саккунсене массă хуçшăнинче ăнлантарнипе йулашки вăхăтра 113 ĕдиноличник хуçалăхĕ колхоза кĕнĕ.

Парти пухăвĕ пусламĕш парторганизацисене массăлă-политикăлă ĕçе вăйлатни тăрăх ĕдиноличниксене колхоза кĕме пулăшаç. Ĕнĕпене çине тăрса ĕçлеме кăтартса хăварчĕ.

Тăшмансем социализăмла вылăхчĕрлĕх ĕрчетес ĕçе сăтăр тăвас шутпа тĕрлĕрен йерекен чирсем сарнă, вылăхсене апатсăр хăварнă т. ыт. те тума тăрăшнă. Райсĕрĕç пайĕн вылăх-чĕрлĕх секретарĕнче ĕçлекен асла врач Йефремăв вылăх-чĕрлĕхе ĕрчетме тăрăшас вырăнне, ăна вăйсăрлатма пулăшнă. Хăшпĕр колхозсенче (Пăртас, Елмен, Алгăçинă т. ыт.) кăçалхи çамрăк вылăхсене йĕркелĕ пăхманнипе чылай вилнисем пулнă. Пайăнки куна районра ĕнесĕр хуçалăхсен шучĕ 18 процент таран шутланат.

Пуху колхозниксен хуçалăхсене пурнăç те ĕнелĕ тăвас, вылăх апачĕсене çителĕклĕ хатĕрлес, вылăхсене хĕл кăçарма хатĕрленес, кĕçĕр вылăхсем хăм пăрахассине пĕтерес ĕçпе тивĕçлине ĕçсем туса иртерме ӳшкăтнă.

Вăрнарти йăлпоа сăтăрçăсем пĕтерсе лартма патнех çитернĕ. Çак иртнĕ вăхăтра парти райкомĕ çине тăрсах ĕçленипе, йăлпоа ура çине тăратнă. Саланса кайас патне çитнĕ Алгăçинă, Уравăш, Нурăс йăлповĕсем те халĕ лайăх ĕçлеме тытăнчĕç.

Промышленнăç ĕнĕпене парти пухăвĕ çакна палăртрĕ: фосфорит савăтĕнчи малтанхи руководствăн политикăлă тимĕрлĕхне пулă халăх тăшманĕсем савăта чылай сийен кӳнĕ, савăтра пушар пулни те вĕсенченех килнĕ.

— Сăтăрла ĕçсен йулашкисене вăхăтрах пĕтерес тесен, пирĕн массăна лайăхрах çыхăнса ĕçлемеле, массăна ĕçлеме вĕрентсе лайăхрах мобилизацилемеле. Парти райкомĕн çекретарĕсем савăтра сахал пулассĕç, вĕсен малашне савăтна çыхăнăвĕ çирĕплетмеле,—тет фосфорит савăтĕнчи пусламĕш парторганизацин парторгĕ Йегоров йулташ.

Вăрманпромохзавăне каснă пăха йăвăссене тăшмансем турттармăшăн çăр вăрмантах хăварнă (унашкал йăвăссене пайăнки куна 20 пин кубометртан 10 пин кубометрне вăрмантан турттарса тухнă ĕнтĕ); йăвăç турттарма автоçула сăтăрла тунă, сарлакăшне 12 метр вырăнне 4,5 метр анчах тунă, вăрмантан касна йăвăçа автомашинă патне 4 çухрăм тăршше лашапа турттарса тухмала.

Халĕ кунта кадрсене çирĕплетес телешпе хăшпĕр ĕçсем тунă, ӳрăхсăррисене уйăхтарса çĕнĕрен лартнă. Анчах вăрманта йăлана ĕçлекен кадрсене пухасси çителĕксĕр пыраť-ха. Пайăнки куна 300 вырăнне 50 çеç, çурăн ĕçлекенсем 400 вырăнне 100 çеç. Вăрманта ĕçлекенсен куçтуранă йăла условисене лайăхлатас гелишне ĕçсем çителĕксĕр пыраççĕ. Пуранăмăн çуртĕр тăвас ĕçре сăтăрлăхăн йулашкийĕсене пĕтерес ĕçленĕпе пайăнки пырать. Капиталăнăй строительствă валăçи уйăрнă укçа-тенкĕрĕн пайăнки куçна 500 пин тенкĕ усă курман.

Парти пухăвĕ халаха вĕрентес, сывлăха сыхлас ĕçпе тунă ĕçсем çителĕксĕр тесе шутласа, парти райкомне ку тĕлĕшпе ĕçлессине вăйлатма хушрĕ.

Государствăна тырă, аш-какай, сĕт-çу, укçа-тенкĕ парас плансене тултарассине васкатас, 1939 çулта пулакан Пĕтĕм Сойузри йăлхуçалăх выставкине лайăх хатĕрленес, вăрлăхсене халех суртлама тытатнас, кĕркри çĕртмене кĕске вăхăтра туса пĕтерес, удобренисем (торф, навус т. ыт.) хатĕрлес т. ыт. ĕçсем йĕнĕпе пуху конкретлă решенисем йышăннă.

Парти пухăвĕ сăтăрçăсен йулашкисене хăвартрах пĕтерессишĕн, хуçалăхлă-политикăлă задачăсене лайăхрах та хăвартрах пурнăçласишĕн партилĕ-организацилĕ тата партилĕ-политикăлă ĕçе вăйлатма кирлине палăртрĕ. Хăшпĕр парти организацисен (МТС, райĕçтăвком) сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕ, парторганизацине йышăннă решенисене тĕрĕслемен. Парти пухăвĕ парти райкомне кашни пусламĕш парторганизацине, комунис-одиночкăна конкретлăн йĕртсе пыма хушрĕ.

Парти пухăвĕ, çаван пекех райкома парти вĕренĕвĕн пахалăхне татăкланах лайăхлатма, ПСК(б)П историне çĕнĕ учебник тăрăх вĕренессине организацилеме хушса хăварчĕ.

Политикăла сисĕмлĕх тата çӳле хăпартса, парторганизацин социализăм строительствин пур участокĕсенче те ташшансен сăтăрла ĕçсен йулашкисене хăвартрах пĕтерессишĕн, пуху йышăннă решенисене пурнăçласа, боҫшевикла кĕрешмеле, троцкисла-бухаринла, буржуалă националлисла агентсен йулашкийĕсене ним йулмиччен çĕмĕрсе тăкмала.

С. Сергейĕв.

Парти историне вĕренес ĕçе вăйлатмала

ШĂХАСАН, сентябрĕн 16 мĕш. (Телефон тăрăх, хамăр корр). „Правда" хаçатра ПСК(б) Партин Тепкомĕн комиссăнĕ редакцилеменĕ ПСК(б) Партин историне пичетлесе каларинне районри коммунистсемпе комсомолĕçсем тата ĕççыннисем пысăк кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Ăна вĕренес хăваласа вăйлан ĕçлеç. Партин райкомĕ тата Уполнаркомзаг çуменчи пусламĕш парторганизацинчи коммунистсем хăйсен пухăвĕнче парти историне вĕренесси çинчен уйрăм ыйту лартса сӳтсе-явнă. Унти коммунистсем „Правда" хаçатра çапăнса тухнă материалсене вуласа вĕренме тытаннă. Сентябрĕн 14-мĕшĕнче 11 кружокра учительсемне перремеш заняти туса парти историн „введение" тата перремеш главăн 2 разделне вĕренĕç. Сентябрĕн 15-мĕшĕнче Тури Сурăм тата Шахасан ватăм шкуленчи комсомолĕçсем кружоксенче организацилĕ занятисене туса иртерĕç. Вĕсенче сентябрĕн 9-мĕшĕнче тухнă „Правда" хаçатан умсăтăнине сӳтсе-явнă. Сентябрĕн 20-мĕшĕнче парти вĕренĕвĕн районри пур кружокĕнче те сĕнĕ учебник тăрăх вĕренме тытăнаççĕ. Парти кабинетĕнче сентябрĕн 15-мĕшĕнче пропагандиссен семинарĕ пулса иртрĕ, унта 20 çын пулчĕ.

Парти истори сапăнса тухнă хаçатсене 4 комплект пухса çĕлесе хунă. Сталин йулташăн революцилĕ вĕçĕсене кăтартакан выставкă организацилеменĕ.

Пайăнки куна ПСК(б) Парти райкомĕ парти историне çĕнĕ учебник тăрăх вĕрентес ĕçе организацилессинчен ăйăкра тăрат-ха. Вăл çак ыйтăва хăйĕн ларăвенче пăхса тухман. Çавăн пекех ПСÇЛКС райкомĕ те комсомолĕçсене парти историне вĕрентесси çинчен райком обӳровĕнче пахса тухман. Сентябрĕн 11-мĕшĕнче ПСÇЛКС райкомне ПСÇЛКС Обком представителĕ Баранăв йулташ килчĕ. Райком работникĕсем парти историне вĕренес ĕçе комсомолĕçсен организацилесси çинчен ыйту лартсан, вăл епĕ правительства заданине пурнăçлатăп, урăх нимĕн те пĕлместĕп, тесе çак пысăк ĕçрен пăрăнчĕ.

ПСК(б) Парти тата ПСÇЛКС райкомĕсен парти историне çĕнĕ учебникпа вĕрентессине халех организацилемелеç.

С. Соколов.

Пуху конкретлă ĕçсем туса иртерме хушрĕ

ТУТАРКАС. Районри парторганизацин пухăвĕ май уйăкĕнче пулса иртнĕ отчотна сӳлăвăн пухăвĕн решенине пурнăçласа тата ташшансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтересси мĕнле пынине çинчен сӳтсе-явăрĕ. Çак ыйту тăрăх пренире 24 çын тухса калаçрĕç.

Тухса калакансем халăх тăшманĕсем сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтересси уйрăмах—йăлхуçалăхенче, суту-илӳре тата судпа следстви органĕсенче начар пынине палăртрĕç.

Райсĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ В. Кангин 1938 çулта 47 колхоз председательне вырăнтан кăлартарăç. Çав вăхăтрах вăл хăшпĕр колхоз руководствинче халăх тăшманĕсем, кулаксем ларнине курман. „1-мĕш Май" колхоз председательĕнче ĕлĕкки усламçă ĕçленĕ. Вăл йӳри колхоз уставне пăсна, ларша таврашне пĕрлештермен. Çак йăнăшсене Кангин вăхăтра тӳрлетме тăрăшман. Ăна халĕ ĕçрен хăтарнă.

Халĕ райсĕрĕçпай пуçлăхĕ пулса „Красное Сормово" колхоз председательĕ пулнă Моисейĕв йулташ ĕçлет. Вăл куллен-кунах колхозсенче пулса, унти çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме пулăшат.

Пренире тухса калакансем уйрăмах МТС ĕçне хытă критикленĕç, МТС-ра ăслă механик пулса Леднев кулак ĕçленĕ, кассирта пуп мăнăç ларат, МТС машинисене часласах çĕмĕрççĕ. МТС кĕркинне те çĕнтăберĕн 11-мĕшĕнче тин пĕтернĕ. Çак çитменлĕхсем пурте МТС-ра политикăлă-массăлă ĕç начар тăнинчен килеççĕ.

Суту-илӳ ĕçенче растратă чакас вырăнне ӳссе пырат. Райсойуз председателĕ пулса ĕçленĕ Колбасăв растратчиксемпе пĕрле хăй кооперацине çăратса пурăннă. Нумăй вилоссенче йединоличниксем ĕçлеççе, вĕсем йăлпоа ĕçленĕ май спекуляци тăваççĕ.

Судпа следстви органĕсем растрата ĕçсене вăхăтра пăхса тухмаççĕ. Растрата пирки суда пынă ĕçсем çурăмран çул ытла выртаççĕ. Атласкин судйа растратчиксемпе кĕрешес вырăнне хăй вĕсемпе ĕçке йăваççа кайнисем пулнă.

Районра çĕнĕ строительствă ĕçĕ начар пырат. Турай шкулне 2 çул хушшинче те туса пĕтермен. Ман Сĕнтĕрти вăтам шкула пайăнки куна çурринче те туса пĕтермен.

Уполнаркомзаг Палкин йулташ конкретнă ĕçртсе пырас вырăнне канцеляринче ытларăх ларат. Хĕрлĕ ĕç вăхăтĕнче вăл работниксене отпуска йăрса пĕтерĕ.

Парти вĕренӳвĕ начар пырат. Хăшпĕр кружокĕнче парти вĕренĕвне тытăнман. Партканăшне тухăçлă ĕçлеме кăçăнăç. Нумăй вăл пĕлĕшĕнче çĕнĕ членсем кĕнĕ

Пĕтĕм Сойузри ăмăртăва хутшăннă

Çак иртнĕ кунсĕнче Тутаркас районĕнчи выльăх-черлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекенсем районри канашлăвă пулса иртрĕ. Канашлура Хотенски районĕнчи колхозниксем чĕнçе калаННине сутсе-йăвнă. Тутаркас районĕнчи выльăх-черлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекенсем Пĕтĕм Сойузри ăмăртăва хутшăнса хăйсем çине çакăн пек обязательствăсем илчĕç:

1. Выльăх-черлĕх ĕрчетмелли государствă планне пур выльăхсем ĕнĕпĕне те кашни колхозра тата районĕпе ăнăçлăн тултармала.

2. 1939 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне енесĕр колхозниксене ĕнеле тумала. Ку тĕлĕшпе пăрусене контрактаци тăвассине анлăн сарса ăмăла, фермăсенчен выльăхсем парассине организацилемелеç.

3. Государствăна аш-какай, сĕтçу царас плана вăхăтра тултармала.

4. Кашни ĕнерен ăватам шутпа районĕпе 2-шер пин литр сĕт суса илмеле.

5. Фермăсенче çамрăк выльăхсене пĕтĕмпех пăхса çитĕнтерме, çамрăк выльăхсем кунсерен 600-шер грам сигенсе пымала тăвас.

6. Сысна фермисенче кашни сысна аминчен 15 çурăран кайа мар илмеле.

7. Çамрăк тыхăсене пурне те лайăх пăхса çитĕнтерес, пĕтĕ кĕçсене кирлĕ пек пăхса, тыхăсене 100 процентчĕпех илмеле тăвас.

8. Кашни 100 сурăх пуçне 120 путек çитĕнтерес, çитес çулта кашни сурăхран вăтам хисеппе районĕпе ике килограм çурăран кайа мар çăм касса илес.

9. Фермăсенчи тата колхозниксен хуçалăхĕнчи выльăхсене метизпи урла—енесене красно-горбатовски вакăрсемпе, лашасене—русско-рысистый айăрсемпе, сурăхсене вĕтĕ çамла тăвасемпе, сысна-сене—английски шурă та таса ăратла сысна аçисемпе чуптарса, ăратлантарса пырас.

10. Выльăхсене хĕл каçарма тĕплĕн тата вăхăтра хатĕрленсе пыма пулатпар.

11. Каçал кĕркунне тата çитес çуркунне çарансене, выльăхсене çуретмели вырансене пурпе 1020 гектар лайăхлатма пулатпăр.

Тутаркас районĕнчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекенсем Чăваш республикĕнчи фермасенче ĕçлекенсене, зоотехниксене, ветеринари работникесене ăмăртăва активлăн хутшăнма чĕнеççĕ.

Осоавиахим ĕçне çĕнетмен

Осоавиахим Трак райсовечĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Пленума Осоавиахим членесĕн билечесĕне улăштарасси мĕнле пыни çинчен çутсе-йăварĕç. Билетсене улăштарнă вăхăтра чылай пусламĕш организацисенче ĕç лайăхланса пыни курăнат. „Красноармеец" колхозри пусламĕш организацире член билечесене улăштарса пĕтернĕ. Çак хушăрах 9 член çĕнĕрен илнĕ. Член укçисене пĕтĕмпех тăвесе татнă. Осоавиахим лотерей билетнеи вăхăтра сарса укçине банка хывнă. Халĕ процент тăрăх йăласкан укçапа оборона ĕçне вĕрешме тĕрлĕрен учебниксем туйаннă.

Райĕстăвкомри финанс пайĕ çумĕнчи Осоавиахим пуçламĕш организацийĕ те лайăх ĕçлет. Член билечесене улăштарса çитернĕ. Оборона ĕçне вĕресессине лайăхлатнă.

Пленумра Осоавиахим райсовечĕн ситменлĕхĕсене те палартрĕç. Осоавиахим райсовечĕн президиумĕ членĕне иккĕмĕш çул тĕрмере ларакан Липатав шутланса тăнă. Çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе ĕçлекен начальник Егоров хваличчен пĕр ларăва та пыман. Райсовет президиумĕн членĕсенчен хăшĕсем хут çинче çеç шутланса тăнă. Советăн ларăвĕсем вăхăтра пулса пыман. Йăлашки вăхăтра пилĕк хут чĕнсе те президиум членĕсем çитмĕлĕкĕр пуханнине палартрĕç.

Закамский.

Оборонă значокĕсем илетпĕр

КАНАШ. Пушăрпа кĕрешекен команда çумĕнчи Осоавиахим пуçламĕш организацийĕ иртнĕ çулта лайăх ĕçлесе пынă. Халĕ организаци председательĕ Ахохин çине тăрсах ĕçе тытăнчĕ. Осоавиахим членĕсем 32 çын. Çак шутран хĕрарăсем 4. Оборонă значокĕсен нормине парасси сарăлсах пыраç. „ПВХО" значок нормине 19 член, „ГТО" нормине 3 член, „ГСО" нормине 4 член, „Ворошиловский стрелок" значок нормине 2 член панă. Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнă тĕле кашни комсомолец „ГТО" нормине пама хатĕрленет.

Организацире тĕл пеме вĕренесси пит лайăх пырать. Осоавиахим членĕсем 32 çын кружок занятисене йĕркелĕн çүреççĕ. Вĕсенчен Трофимав, Чикин, Герасимав йăлташсем-нормăсем панă та ентĕ.

Çавăн пекех „ПВХО" значок нормисене парасси те лайăх пырать. Колхоз председательĕ Н. Павлав: „Манран унта çын тупса йăрасси пулмасăр, никам та каймасăр, тесе ларат. Ку пачах тĕрĕс мар, строительствăна кайас текенсем сахал мар.

В. С. Алендейĕв.

Канаш—Шупашкар чукунçул строительствинчи стахановла çирĕмкунлăх

Çĕнĕ стахановецсем ӳсеççĕ

Виççĕмĕш участкăри Мефодиев Дмитрийĕвă иртнĕ çулта та, кăçал та колхозăн строительствăра ĕçлемели планне пĕр пĕччен ĕçлесе тултарнă. Халĕ-вăл баластировкара ĕçлет. Ĕçе хăнăхса çитнĕ те нормăна йăланах 200—250 процентшар тултарат. Ытти рабочисем 8 сехет хушшинче икшерĕн ĕçлесе 4—5 платформă çинчи хăйăра пушатаççĕ, Дмитрийева йăлташ пĕччен 5—6 платформă пушатат. Стахановла çирĕмкунлăха хутшăнса, вăл тата пысăкрах обязательствă илчĕ: сменăра 7 платформă пушатмала. Халĕ ăна та анăçлăн тултарса пырать.

Мефодиев, Цыпăлăйев, Йемельянив йăлташсем те малтанхи вăхăтрипе танлаштарсан чылай пысăк ушăнусем тӳрĕç. Стахановла çирĕмкунлăх пусланнăранпа плана 200-шер процент тултарса ĕçлеççĕ. Мефодиев, Дмитрийĕвă, Цыпăлăйев йăлташсем пĕр платформă хăйăра 45 минут хушшинче пушатас вырăнне 19—22 минута пушатаççĕ.

Вĕсем татах та лайăхрах, хастарлăрах ĕçлеме пултараççĕ, вăхăтра тата çитĕлекле тăран платформă паманни çеç чĕрмантăрса тăрат. Хăш чухне состав сахал пирки 3—4 сехет ĕçлесенех хăйăра пушатса пĕтеççĕ. Ытти вăхăчĕ вара ăхалех иртет. Простой ăн пултăр тесен строительствă управленийĕ кирлĕ тăран платформă парса тăрассине йĕркелемелеç.

Х. Л.

Хĕле йăпăх хатĕрленеççĕ

ИШЛЕЙ. Выльăхсене ăнăçлăн хĕл каçарма ăшă та çутă витесем, сĕткемлĕ апатсем кирлĕ. Анчах, Ишлей районĕнче выльăхсене хĕл каçарма йăпăх хатĕрленеççĕ. Автоаккассинчи колхозăн каçал сысна ферминче план тăрăх 80 пуç сысна пулмала пулсан, 140 пуç çитнĕ. Сыснасен хисепĕ ӳссе пырат пулсан та колхоз правленийĕ вĕсем валăри ăшă витесем тума вăскамаст. Савнашкалах „Комбайн" колхозра. Кунта сĕт-çу ферминчи ĕнесем валăри иртнĕ çултах вите тума тытăнмă, хăҫ те туса пĕтермен.

Автоаккасси, „Çĕнĕ хунав", „Комбайн" колхозсем ку вăхăтченех пĕр тонна та çилос хывман.

Кирăв йăчĕпе тăракан колхозра ĕçсем пачах урăхла. Кунта выльăхсене хĕл каçарма тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Лаша витисене ӳсанă. Сурăх ферми витине туса çитереççĕ. 71 тонна çилос хывса хăварнă. Çакăн пек лайăх ĕçлекен колхозсен опычĕсене йăлтах пыракан колхозсене куçарса пырас пулать.

Г. Шчербаков.

9 çул бригадир ĕçĕнче

